# КИВЕЛМЕÇÇĔ КĔВВИСЕМ



**Юрий ИЛЮХИН**

Раççей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

**А**СЛĂ ăрури чăваш композиторĕсенчен тăваттăн кăна юлчĕç. В.Ходяшевпа Т.Фандеев – сакăр вун икке кайнисем, Ф.Васильев та вĕсене хуса çитесшĕн, Анисим Асламас вара вĕсенчен чи "çамрăкки" – халь кăна 75 çул тултарчĕ-ха.

Халĕ те çырма пăрахманха вăл, ĕлĕкхи пекех нумай, тухăçлă ĕçлет. Кашни çул /кашни кун теме те юрать/ ун чĕринче çĕнĕ кĕвĕсем çураласçĕ. Шел, чылайăшĕпе эпир паллашаймарăмăр-ха: кун пек йывăр саманара вĕсене пичетлеме кăна мар, концерт эстрадине кăларма та йывăр. Анчах, ĕненетĕп эпĕ, пурăна-киле янрама пуçлĕç-ха вĕсем те. Асламас хайĕн хайлавĕсене халăх валли çырать вĕт.

Асламаспа /Анисим Васильевпа/ эпир пĕр вăхăтри çынсем, пĕрле ÿснĕ тантăшсем. Вăрçă умĕнхи 1939-1941 çулсенче, Шупашкарти музыка училищинче вĕреннĕ тапхăрта туслашрăмăр. Общежитире те пĕр пÿлĕмре пурăнаттăмăр. Чăваш поэзийĕпе музыка илĕртнĕ ун чух пире. Пулас композиторăн пирвайхи юрри хăçан тата мĕнле çуралнине ас тăваканни эпĕ анчах юлнă пуль.

Анисим роялньпе тĕрлĕ импровизацисем калама ăстаччĕ. Çавăн пек самантсенче çуралчĕ те ĕнтĕ унăн пирвайхи юррисенчен пĕри /1939/, автор ун чух вун пиллĕкре пулнă:

**Юлан утлă**
**партизан**
**Пынă урампа**
**иртсе.**
**Пăхса юлнă**
**кантăкран**
**Сар хĕр куççульпе**
**йĕрсе...**

Сăвви камăн пулнине халĕ ас тумастăп. Те "Сарă хĕр", те "Партизан вилĕмĕ" ятлăччĕ вăл. Вăрçăччен ку юрă ниçта та пичетленмен, ăна кам та пулин юрланине те ас тумастăп. Тепĕр 24 çултан тин тепĕр хут илтрĕмĕр эпир çак кĕвве: композитор ăна "Шуршăл евчи" музыкăллă комеди партитурине кĕртнĕ /"Надя юрри"/. Çапла, çамрăк чух ĕнерленĕ кĕвĕ композитор пултарулăхĕнчи чи илемлĕ юрă кĕвви пулса юлчĕ /"Чупрăм тухрăм эпĕ кÿлĕ хĕррине"/.

Етĕрне районĕнчи Вăрманкас-Асламасра çуралнă композитор, ачаранах хăйĕн пултарулăхĕпе палăрнăскер, ял ĕçченĕсене чылай юрă парнеленĕ /юррисене вун пĕр кĕнекепе кăларнă/. Кам пĕлмест пуль "Чĕвĕл чечексем" сăмахсемпе пуçланакан "Савăнăç юррине"? Пĕрлештернĕ хорсем те юрлаççĕ ăна халăх уявĕсенче. Нумайăшĕ лирика туйăмĕпе илĕртет: "Сĕрме купăс", "Астăватăп", "Анлă Атăл хĕрринче", "Атăл тăрăх утрăм", "Тăван хула", "Юрату юрри çунатлă" т.ыт.те. Мĕн тери ăста çырнă хутăш хорпа юрламалли "Тупата" ятлă шÿтлĕ юрра, К.В.Иванов поэзийĕпе çыхăннă "Сĕм-сĕм вăрман" хора!

Юрăсемпе хорсем нумай композиторăн, анчах унăн пултарулăхĕнче пысăк формăллă хайлавсем тĕп вырăн йышăннă. Киеври тата Мускаври консерваторисен композици класĕсенче вĕреннĕскер, музыкăра пур жанрсенче те ĕçлеме вăй тупрĕ. Чăнах та мĕн кăна çук-ши Асламасăн? Опера, балет, музыка комедийĕ, оратори, кантата, поэма, симфони, увертюра, инструментпа каламалли концерт, квартет тата ытти жанр та пур. П.Осипов сюжечĕсемпе çырнă "Айтар", "Вĕçленеймен кĕвĕ" оперăсене, "Шуршăл евчи" музкомедие, К.Полякова Г.Фере либреттипе аталанакан "Çеçпĕл" оперăна театр сцени çинче кăтартрĕç, унта "Космос симфонийĕ" музыкипе балет лартса пачĕç.

Фортепианăпа оркестр пĕрле каламалли "Чăваш рапсодийĕ" композиторăн чи чаплă хайлавĕсенчен пĕри. Ăна калама автор хăй те пĕрре кăна мар хутшăннăччĕ. Асламас-пианиста концерт залĕнче итлесен С.Шавли поэт çапла çырнăччĕ:

**Вылянчăк аллусем –**
**аристократăн.**
**Шутла сана хресчен**
**ачи тесе.**
**Орфей та итлĕччĕ**
**хĕпĕртесе,**
**Вĕçсе каяс пек çĕкленсе**
**ларатăн...**

Ăста кăна янăрамарĕ пуль çак "Рапсоди": Шупашкарта, Мускавра, Минскра, Чулхулара, Ижевскра... Гобойпа оркестр валли çырнă концерта Хусанта, Саратовра, Чулхулара, Мускавра, Шупашкарта каласа панă. "Асаттесен кĕввисем" поэмăна – чăвашсен чаплă музыкантне А.С.Любимов гобоиста халалланă произведение – халĕ хамăр çĕршывра кăна мар, чикĕ леш енче те пĕлеççĕ, ăна пластинкăпа Японире те кăларнă /солисчĕ А.Любимов/. Трубапа оркестр каламалли концерта та кăмăлласа йышăнчĕç.

Чăваш ялĕнче çуралса, чăваш хушшинче ÿснĕ композитор тăван халăхăн музыка фольклорне лайăх пĕлет, унпа профессиллĕ творчествăра анлăн уса курать. Çакна чылай сочиненире асăрхатăн. Сăмахран, "Чăваш рапсодийĕнче" "Сĕрен", "Тÿттĕл", "Асран кайми" юрăсен кĕввисене, фортепиано пьесисен "Тăван ялта" ярăмĕнче "Пирĕн урам анаталла" юррăн тата сăрнай кĕввисене илтетпĕр, "Асаттесен кĕввисем" поэмăра Самар облаçĕнчи Йĕкĕр ялĕнче çырса илнĕ хĕр йĕрри янăрать.

Композитор творчествăра ялан хăйĕн çулне шырать, хăйне çеç тивĕçлĕ музыка чĕлхипе уса курать. Çавна май Асламас музыки ытти авторсен музыкинчен пачах урăхла янăрать. Унта эпир хăйне евĕрлĕ илтĕнекен кĕвĕ çаврăнăшĕсене, ритм пуянлăхне туятпăр.

Анисим Васильевич Асламас – Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ, связист-телефонист пулса Брянскпа Орел патĕнчен Берлинах çитнĕ. Мирлĕ пурнăçра вăл паллă композитор, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ пулса тăчĕ.